

# ИЛЕМЛĔ ПРОЗА ĂСТИ

**ЧĂВАШ ХАЛĂХ ÇЫРАВÇИ**
**ÇЕМЕН ЭЛКЕР ÇУРАЛНĂРАНПА**
**125 ÇУЛ ÇИТНĔ МАЙ**

**ЛИТЕРАТУРА УЯВĔН СЦЕНАРИЙĔ**



Чăваш Республикин культура, националноҫсен ĕҫĕсен
тата архив ĕҫĕн министерстви

Чăваш Республикин наци библиотеки

# ИЛЕМЛĔ ПРОЗА ĂСТИ

## ЧĂВАШ ХАЛĂХ ҪЫРАВҪИ
## ҪЕМЕН ЭЛКЕР ҪУРАЛНĂРАНПА
## 125 ҪУЛ ҪИТНĔ МАЙ

ЛИТЕРАТУРА УЯВĔН СЦЕНАРИЙĔ



Шупашкар
2019

ББК К78.38
И 43

Редакци совечĕ: М. В. Андрюшкина
А. В. Аверкиева
Н. Т. Егорова
Т. А. Николаева
Е. Н. Федотова

Каларăмшăн яваплă
Г. П. Соловьева

Хатерлекенĕ
О.Н. Тимофеева

Илемлĕ проза ăсти : чăваш халăх çыравçи Çемен Элкер çуралнăранпа 125 çул çитнĕ май : литература уявĕн сценарийĕ / Чăваш Республикин наци библиотеки ; хатĕрлекенĕ О. Н. Тимофеева. – Шупашкар, 2019. – (Чăваш енĕн паллă çыннисем, паллă кунĕсем ; 16 кăларăм). – 20 с.

© Чăваш Республикин наци библиотеки, 2019

ИЛЕМЛӖ ПРОЗА ӐСТИ

чӑваш халӑх ҫыравҫи Ҫемен Элкер
ҫуралнӑранпа 125 ҫул ҫитнӗ май
литература уявӗн сценарийӗ

*Хӑтлӑ залра Ҫемен Элкере халалланӑ кӗнеке куравне йӗркеленӗ. Уяв пуҫланнине систерсе илемлӗ чӑваш кӗвви (хурлӑхлӑ) янӑраса каять.*

*Экран ҫинче видео пырать: куракан умне каҫхи тӳпе тухса тӑрать, ҫӑлтӑрсем пӗрин хыҫҫӑн тепри ҫуталаҫҫӗ, Ала ҫӑлтӑр палӑрма пуҫлать. Ҫемен Элкер сӑнӗ тухса тӑрать.*

**Ертсе пыракан**: 1966 ҫул. Юхма Мишши ҫыравҫӑ кун кӗнекинчен:

Ҫӳл тӳпере ҫич ҫӑлтӑр,
Ҫич ҫӑлтӑр та ҫут ҫӑлтӑр,
Ҫич ҫӑлтӑртан чи ҫутти
Элкер ҫӑлтӑр тесеччӗ.

Чӑвашра поэт нумай,
Кашни поэт – ҫут ҫӑлтӑр,
Поэтсенчен чи чапли
Пирӗн Элкер пиччеччӗ.

**Ертсе пыракан**: Чӑваш халӑхӗн мухтавлӑ ывӑлӗ, чӑваш литературин классикӗ, аслӑ поэтӑмӑрсенчен пӗри Ҫемен Элкер пирӗнтен ӗмӗрлӗхех уйрӑлса кайнӑ хыҫҫӑн ҫуралнӑ ҫак хурлӑхлӑ йӗркесем. Унтанпа вӑхӑт чылай иртрӗ. Апла пулин те поэтӑн ҫутӑ сӑнарӗ яланах пирӗн куҫ умӗнче, унӑн ячӗ, пархатарлӑ ӗҫӗсем нихӑҫан та асран тухмӗҫ, чӑваш литературин ылтӑн ҫӳпҫине кӗрсе юлнӑ хайлавӗсем ҫулсем иртнӗҫем

те хăйсен çивĕчлĕхне çухатмĕç, çамрăк ăрăва тăван çĕр-шыва, халăха, чĕлхене юратма, ыррипе усаллине уйăрма, тивĕçлĕ гражданин пулма вĕрентсе пырĕç.

*Хурлăхлă кĕвĕ хаваслăраххипе ылмашăнать. Экран çинче çĕнĕ видео пуçланать: чăваш ялĕсем, юхан шывĕсем, вăрманĕсем, Кушлавăш тăрăхĕн сăн-сăпачĕ умлă-хыçлă тухса пыраççĕ.*

**Ертсе пыракан**:

Кушлавăш текен вуникĕ ял уйĕ
Хура вăрманпа хупланса выртать.
Çулла е хĕлле – такам та туйĕ –
Вăрманлăх кунта хӳтлĕхне тытать.
Хаваслă кĕтес! Сывлать вăл кал-кал...
Илемлĕ, аслă çакăнти вăрман.
Пĕр-икĕ ĕмĕр пирĕнтен авал
Вĕçĕ-хĕрри ун ниçта курăнман.
Ик-виççĕр çулхи яштак ват хырсем
Кармашнă унта пĕлĕте пăхса,
Кунĕн те çĕрĕн канмасăр вĕсем
Кашланă текех тем канашласа.
Çак хырлăхсенчех ушах мăк шурри
Талккиш-талккишпе выртнă сарăлса.
Пăши-пăлансем, – сăрри, чăпарри, –
Çӳренĕ унта шурлăха çăрса.
Мăк шурлăх леш енĕ – чăрăшлăх, вĕтлем –
Хĕвел çутине çĕр çине яман;
Унта çăмламас, хаяр упасем
Нимле кайăка пуç пулма паман.
Унтах, тĕлĕпе, катмар юмансем
Çăра çулçăпа шавланă текех.

Çамра* тĕрлĕрен кайăк-кĕшĕксем
Янратнă юрра кунĕ-çĕрĕпех.
Унта та кунта ахрат çырмисем
Выртнă пытанса вăрман тĕпĕнче,
Çут тĕкĕр тĕслĕ тăрă шывĕсем
Курăк айĕпе юхнă вĕсенче.
Янтак чăрăшсем вăрман варринчен
Пăхнă кармашса тĕнче хĕрнелле,
Таçти, инçетри уй-хир тӳпинчен
Курăннă вĕсем чиркӳ тăррилле.
Çынна палламан вĕлле хурчĕсем
Сĕрленĕ унта ирĕклĕн вĕçсе,
Ешне-уйсенчи чăпар чечексем
Чӳхеннĕ вĕл-вĕл вĕсене чĕнсе.
Çак аслă вăрман сĕмлĕхĕсене
Чылай ĕмĕрсем çын пырса кĕмен.
Катмар йывăçсем хăйсен ĕмĕрне –
Мĕскер вăл пуртă – курман та пĕлмен.
Кунсем, çулсем иртнĕ.
Хайхи вăрмана
Этем пырса çитнĕ.
Улах вырăна
Уй-хир çĕрĕнчен пынă чăвашсем
Ларса хӳтĕленнĕ:
Кушлавăш, Хапăс, Хумпуç ялĕсем
Унта тĕвĕленнĕ.

*(«Хĕн-хур айĕнчен» поэмăран)*

---

* Çулçăллă вăрман

**Ертсе пыракан**: Кушлавăш уйне кĕрекен вун икĕ ялтан пĕри вăл – 1700 çул тĕлне е унтан та маларах пуçланса кайнă Пысăк Упакасси ялĕ. Шăпах çак тăрăхра 1894 çулхи çу уйăхĕн 1-мĕшĕнче вăтам хресчен кил-йышĕнче Çемен ятлă ывăл ача çуралнă. Халĕ ку ял Йĕпреç районне кĕрет.

**Ертсе пыракан**: Çыравçă аса илĕвĕнчен: «Пирĕн кил йышĕ пысăк. Анне 11 ача çуратнă та, вĕсенчен икĕ ывăл, чи аслипе чи кĕçĕнни çуралсанах вилнĕ. Пĕр тăвансем тăххăрăн шĕшкĕ хунавĕсем пекех сыввăн ӳссе çитĕнетпĕр. Асли Улюк акка, пĕчĕкрех, асси пуснă тет хăйне хăй; ун хыççăнхи пичче, ку вара аттепе шăкăртатсах калаçкалатчĕ. Маттюк, Якур, Уриççа, Павăл, Тимахви, Симун, Марья – Улюкпа Хветюкран кĕçĕннисем. Кил-çуртри йывăр ĕçсем пĕтĕмпех çав икĕ асли çине – Улюкпа Хветюк çине ӳкнĕ ĕнтĕ. Ыттисем ачашрах пулнă пулас»[1].

«Пирĕн çемье ĕçчен хресчен çемйи пулнă. Вăл тăрăшсах ĕçленĕ. Анчах та нехекрен пулса пыракан тĕрлĕрен инкек-синкек такăнтарнипе атте хуçалăхĕ, хăй калашле, «ниепле те чухăнлăх ланкашкинчен сиксе тухаймарĕ...». Ĕни ӳксе вилет е лашасене вăрласа каяççĕ»[2].

**Ертсе пыракан**:

Килтех ӳссе çитĕнтĕм,
Этем шутне ир кĕтĕм.
Атте-анне нушине
Часах хыврăм чĕрене.

---

[1] Кузьмин, В. П. Элкер çăлтăрлăхĕ : чăваш халăх поэчĕ Семен Васильевич Эльгер çуралнăранпа 115 çул тултарнине халалласа / В. П. Кузьмин. – Шупашкар, 2009. – С. 14.

[2] Элькер, С. Ачалăхри паллă кунсем // Элкер, С. В. Хурапа шурă. Тĕрлĕ вăхăтра çырнисем : проза, поэзи, аса илӳсем, кун кĕнекинчен, çырусем, хаклавсем, асăрхаттарусем / С. В. Элкер. – Шупашкар, 1994. – С. 15.

Салху шухăш хупласан,
Пуç ыратсан, ăш çунсан
Пурччĕ ман пĕр çăлăнăç –
Аслă уйри пурăнăç.

Тухатăп та утатăп,
Вăрмана та пыратăп;
Ирĕкри уç сывлăша
Çăтатăн çеç хам ăша.

Тăван уй-хире савса,
Çĕнĕ сăвăсем хурса
Ирĕклĕхре юрлатăп,
Каллех ыррăн туятăп.

*(«Çăлăнăç», 1919, август)*

**Ертсе пыракан**: Çемен мĕн ачаран çепĕç чунлă, тăнлă пулнă, пур япалана та пĕр сăмахранах ăнланса илме пултарнă. Шкула кайичченех вăл çырма та, вулама та вĕреннĕ. Ялти шкултан ăнăçлă вĕренсе тухнă хыççăн малалла вĕренме кайма ăнтăлнă. Анчах та йывăр пурнăç, тискер самана унăн ĕмĕтне пĕр шелсĕр татнă. Хастар ачан вĕренес кăмăлĕ çав тери пысăк пулнă, вăл хăй тĕллĕн нумай вулама тăрăшнă.

**Ертсе пыракан**: Çемен Элкер аса илĕвĕнчен: «Кӳршĕсем темĕн каласан та пирĕн çемье кĕнеке-хаçат таврашне юратма пăрахмарĕ. Вĕсене пиччесем тĕрлĕ çĕрте – пасарсенче, чукун çул станцинче тупкаласа илетчĕç. «Хыпар» хаçата пирĕн килте ятарласах çырăнса илмен. Унăн уйрăм номерĕсене кăна Ачча пасарĕнче пĕр коробейникран илсе тăнă, пасарта илеймен номерĕсене Иван Сидоровран илсе вуланă. Тăван

чĕлхепе тухакан хаçатри çĕнĕ хыпарсем, унта патшалăхри тата тĕнчери лару-тăрусем çинчен каласа панисем, паллах, пире хытă интереслентернĕ. Эпĕ хам пуринчен ытларах хаçатри сăвăсене, калав пеккисене кăмăлласа вулаттăм.

**Ертсе пыракан**: «Тепрехинче хамăр аттен пиччĕшĕ – ватă Мĕкĕте салтак, çар службинчен вулама та, çыркалама та вĕренсе килнĕскер, çарта духовой оркестр трубачĕ пулнă этем, темĕнле ĕçпе Хусана кайсан ман валли темиçе вĕр çĕнĕ вак кĕнеке илсе килсе пачĕ. Çав кĕнекесем хушшинче А. С. Пушкинăн рисункăсемпе хитрелетсе кăларнă «Кавказский пленник» поэми, Л. Толстойăн «Хаджи Мурачĕ», И. С. Никитин, А. В. Кольцов сăввисен кĕнекисем тата ыттисем те пурччĕ».

**Ертсе пыракан**: Вырăс классикĕсен витĕмĕпех Çемен поэзи ытамне кĕрсе ӳкнĕ, сăмах хăватне, илемне туйма вĕреннĕ, вун тăвата-вун пилĕк çулсенчех вăл алла калем тытса сăвăсем шăрçаланă. Хăй пĕлтернĕ тăрăх «ун чух çырнисем хушшинче паха япаласем пулман ĕнтĕ. Вĕсене вăл вырăс поэчĕсен сăввисем евĕр калăпласа, ăш-чикĕпе хăйсен таврари пурнăçа е таврари çĕр-шыва эрешлесе кăтартма тăрăшнă. Мĕн çырнисем пĕри те халиччен усранман».

**Ертсе пыракан**: 1914 çулта Пĕрремĕш тĕнче вăрçи алхасма тытăннă. 1915 çулта çирĕмри Çемене çара илнĕ, Галицин пуç хулине – Львова илсе пынă, тепĕр куннех фронта ăсатнă. Çу уйăхĕнче поэт инçетри Карпатра, Венгри чиккинче йывăр суранланнă, Австро-Венгрире тыткăнра пулнă. Мĕн чухлĕ асап витĕр тухмалла пулнă поэтăн! 9 уйăх госпитальте выртнă, операци хыççăн операци тӳснĕ. Выçăллă-тутăллă пурăнса, сивĕпе нушаланса чылай аптранă.

**Ертсе пыракан**:

Пултăм эпĕ Карпатра
Тĕнче çуннă самантра.
Ĕмсе юлчĕ çав Карпат
Манăн çăмăл юнăма,
Çамрăк вăйăм-халăма.
Карпат сăртсем вăрманлă,
Шырланлă, çырмаллă.
Вăрман-çырма тĕпсенче
Выртkалатчĕç салтаксем,
Ĕмĕрлĕхех ӳкнисем.
Çӳллĕ тăвсем хушшинче,
Çав хуйхăллă кунсенче
Ĕмĕрлĕхе астума
Юнлă çăлсем тухатчĕç,
Хĕрлĕ шывсем юхатчĕç.
Сĕвек тăвайккисенче,
Çырма-хушăк тĕпсенче
Курăнатчĕç чылаях –
Тарăн, вăрăм окопсем,
Çĕн тăпраллă масарсем.

*(Вăрçă сăввисем, 1917)*

**Ертсе пыракан**: 1916 çулта тин Семен Васильев салтака тăван çĕр-шывне таврăнма ирĕк панă.

Эй, Кушлавăш, ешĕл уй, –
Çут ачалăхăм сăпки!
Пĕл, ăнланччĕ мана, туй:
Эс ман пурнăç кăвапи.
Туй – эп хушăн çуннине,
Пĕл – сана манмассине.

Йышăн мана ытамна –
Вăрçă хуçнă ывăлна!
Йышăн... Сывлăх пирчиччен
Пар канма чĕрçӳ çинче...
Ик-виç çул эп аякра
Саншăн тĕмсĕлтĕм ăшра:
Малтан - вăрçă хирĕнче,
Тыткăнра, ют çĕрсенче,
Унтан – хамăр çĕр-шывра,
Тĕрлĕ шавлă хулара.
Эс таçта та яланах
Аса килтĕн час-часах...

*(«Киле таврăнсан», 1918, июнь)*

**Ертсе пыракан**: Яла таврăнсан Семен Васильевич тĕрлĕ вăхăтра ялти чухăнсен комитечĕн председателĕ, Кушлавăш волисполкомĕн членĕ пулса ĕçленĕ, ачасене вĕрентнĕ, хаçат-журнал редакцийĕсенче, Чăваш кĕнеке издательствинче тăрăшнă, общество ĕçне хастар хутшăннă. Çав хушăрах илемлĕ хайлавсем çырма та вăй çитернĕ. Çапах та поэт хăйĕн сăввисене редакцисене ярса пама темшĕн именсе тăнă, çырнисене татах та якатмалла, тӳрлетмелле, сăмах ăсти пулма нумай вĕренмелле тесе шутланă. 1921 çулхи февралĕн 21-мĕшĕнче кăна «Канаш» (хальхи «Хыпар») хаçатра Çемен Элкерĕн «Ешĕл хурăн» сăвви пичетленсе тухнă. Ку вăл – поэтăн пичетре кун çути курнă чи пĕрремĕш сăвви. Халăх юрри майлă çырнă хайлав çут çанталăк илемĕпе авторăн шалти кăмăл-туйăмне кăтартса парать.

**Ертсе пыракан**:

Таса уйра, тӳремре,
Çул хĕрринчи çеремре
Ешĕл хурăн çитĕнет.

Çил ăскаман вăхăтра,
Сивĕ тивмен самантра
Тăп ларса вăл киленет.
Шерепеллĕ туратсем,
Вĕтĕ, кăтра çулçисем
Çиçеççĕ ун йăлкăшса,
Çурхи ырлăхлă куна,
Хăй ларакан таврана
Тăраç илемлĕх парса.
Тĕрлĕ вĕçен кайăка
Ларса канма, вăй пухма
Хăй çинех вăл илĕртет.
Кайăк, ăна тав туса,
Савăк юрă юрласа,
Çут сывлăша вирхĕнет.
Çавна курса, савнăçпа,
Эпĕ хам та юрлама
Хурăн айне вырнаçап:
Куççуль тăкнă куççене
Ĕмĕрлĕхех типĕтсе
Хавас юрă шăратап.

*(«Ешĕл хурăн», 1918)*

**Ертсе пыракан**: Çемен Элкерĕн пĕрремĕш кĕнеки «Самана» ятпа 1928 çулта тухнă. Унта кĕнĕ сăвăсем вулакана тарăн шухăшĕпе, яка чĕлхипе, сăнарлăхĕпе тыткăнлаççĕ. Хăйĕн сăввисенче поэт ытларах чухне тăван ен, тăван халăх, чĕлхе, çут çанталăк, вăрçă темисене хускатнă.

**Ертсе пыракан**: Çыравçă пултарулăхĕнче «Хĕн-хур айĕнче» поэма пысăк вырăн йышăнать. Хайлав малтанласа «Сунталăн» 1925 çулхи 8-мĕш номерĕнче пичетленме пуçланă. Унта автор

çапла ăнлантарнă: «Айăпсăр таркăн» ятлă историлле поэмăн малтанхи сыпăкĕ».

Поэмăри ĕçсем Пугачев пăлхавĕ хыççăн пĕр вунă çултан пулса иртеççĕ. Унта халăх пурнăçне питĕ курăмлă кăтартса панă. Тӳре-шара пĕр вĕçĕмсĕр хресченсене пусмăрлани, куланай ыйтни, уççăнах çаратни чăвашсене вăрманалла е пачах çĕнĕ вырăнсене хăвалать.

*(Экран çинче Аслă Аттелĕх вăрçине сăнланă кадрсем тухаççĕ, вăрçă юрри хуллен янăрать).*

**Ертсе пыракан**: Малтанхи тĕнче вăрçинчех урасăр тăрса юлнăскер, Çемен Элкер 1941-1945 çулсенчи вăрçа хутшăнман, апла пулсан та питĕ вирлĕ янăракан сăвăсемпе поэмăсем хайлама хăват çитернĕ. Уйрăмах «Вăл вилĕмсĕр» поэма вăрçă вăхăтĕнчи лайăх хайлавсен шутне кĕрсе юлнă. Поэмăн тĕп геройĕ – Ленинград патĕнчи юнлă çапăçура пуçне хунă харсăр Иван Смирнов пулеметчик, чăн-чăн халăх паттăрĕ.

**Ертсе пыракан**:

Смирнов – типтерлĕ хӳхĕм яш.
Ахаль чухне – шутник, йăваш;
Ĕçре – ялан  хĕрӳ, вăр-вар,
Хăрушлăх чух – вĕри, хаяр.
Юратнă вăл юлташлăха, –
Шӳтле сăмах-халапсене;
Ырланă тӳрлĕх-чăнлăха,
Мухтанă паттăр çынсене…

… Чăваш ачи, чăваш çынни
Совет çемйин тăванлăхне
Мĕльюн çынсен ирĕклĕхне
Сыхласшăн хучĕ хăй пуçне.
Вăл тивĕç – чăн герой ятне.
Ун ячĕ вилмĕ ĕмĕрне:
Вăл вилĕмсĕр!

*(«Вăл вилĕмсĕр» поэма сыпăкĕ)*

**Ертсе пыракан**: Пысăк хапаллă кĕнекесенчен С. Элкерĕн «Шурăмпуç килсен», «Вутпа çулăм витĕр» романĕсем, «Вун саккăрмĕш çул» драми тата нумай-нумай калавĕ палăрчĕ. Чăваш халăх поэчĕ Элкер сăмахлăх хирĕнче хĕрĕх çул ытла ĕçленĕ. Çав вăхăтра ача-пăчапа çитĕннисем савăнса вуламалăх та, ятарласа яш-кĕрĕм валли те самай çырнă.

**Ертсе пыракан**: 1961 çулта 67 çулхи Элкер чăвашăн ырă йăли-йĕркине упраса аталантарас, халăх чĕлхине, унăн йышне упрас тĕллевпе парти обкомне темиçе çыру та çырса пăхнă. «Чăваш йышĕ хăвăрт ирĕлет», «Хам чăваш, ачасем – вырăс» ятлă статьясем çырнă поэт-публицист, анчах вĕсем пичетленмен. Обком «националист» ярлăк çакнă ватă шур сухалтан пурте пăрăнса иртме, курмăш пулма тăрăшнă. Çак тапхăрта вăл класс кĕрешĕвĕ идейинчен сивĕнсе çитнĕ, хăйĕн чи лайăх хайлавĕсенчен пĕрне – «Хурапа шурă» повеçне çырнă. Унта çыравçă хăй пурнăçĕн хăш-пĕр саманчĕсене илнĕ, юратури тасалăх çинчен тĕплĕ çырса кăтартнă. Повесть малтанхи хут 1962 çулта пичетленсе тухнă.

**Ертсе пыракан**: Çемен Элкере икĕ хутчен РСФСР Верховнăй Совечĕн депутатне суйланă. Вăл 1937 çултан пуçласа вун пилĕк çул хушши пĕр улшăнмасăр Чăваш писателĕсен союзĕн правлени членĕ пулнă. Тăван литературăна аталантарас тĕлĕшпе тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн 1940 çулта ăна Чăваш халăх поэчĕ ятне панă, 1945 çулта Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе, 1950 çулта Ленин орденĕпе наградăланă. Çемен Элкер 1934 çултанпа СССР писателĕсен союзĕн членĕ пулнă.

**Ертсе пыракан**: 1974 çулта ака уйăхĕн 17-мĕшĕнче Чăваш Республикин журналистсен союзĕн правленийĕ, унăн председателĕ Павел Крысин пуçарнипе, пултаруллă çыравçăсене хавхалантарас тĕллевпе преми йĕркелеме йышăннă. Шăпах çак тапхăрта республикăра Чăваш халăх поэчĕ Семен Васильевич Элкер çуралнăранпа 80 çул çитнине анлă паллă тума хатĕрленнĕ. Паллă писатель-публицистăн чăваш пичетне, журналистикăна аталантарас ĕçре тӳпи пысăк пулнине шута илсе премине унăн ятне пама йышăннă. Çемен Элкер ячĕллĕ премийĕн пĕрремĕш лауреачĕн ятне 1975 çулта икĕ журналист Пĕтĕм Союзри радиопа Тĕп телевиденин Шупашкарти корреспонденчĕ Юрий Князев тата «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн культура, литературăпа искусство пайĕн пуçлăхĕ Лаврентий Таллеров тивĕçлĕ пулнă[3].

*Уява Ç. Элкер ячĕллĕ премин пĕр-пĕр лауреатне чĕнме пулать.*

**Ертсе пыракан:** 1966 çулта Пысăк Упакасси шкулне чăваш халăх поэчĕн Çемен Элкерĕн ятне панă. 1988 çулта поэт çуралнăранпа 95 çул çитнĕ тĕле шкулта литература музейне уçнă. Шупашкар хулин Мускав районĕнче Элкер ятлă урам пур.

[3] Михайлов, А. Ырă тĕслĕх пулса тăчĕç / А. Михайлов. – Ялав. – 2004. – № 4. – С. 103-106.

**Ертсе пыракан:**

Чăн-чăн поэт пулман пуль эпĕ,
Мана тĕсмест-тĕр ун хисепĕ.
Анчах поэзие юратнă,
Унпа пуçа çех хытă ватнă.

Тен, эп прозаик, публицист та,
Хăш чух редактор, журналист та.
Ĕçленĕ хĕрĕх çул таран
Чăвашлăха савса чунтан.

*(«Чăн-чăн поэт пулман пуль эпĕ...», 1960)*

**Ертсе пыракан:** Çемен Элкер пултарулăхĕ нумай енлĕ, унăн сăвви-юмахĕсем, романĕсемпе повеçĕсем, тĕпчевĕсемпе статйисем ĕмĕрлĕхе халăхăмăрăн асĕнче упранса юлĕç. Аслă поэтăмăр тăван чĕлхене сыхласа хăварассишĕн, тăван халăха культура тĕлĕшĕнчен малта пыракан халăхсен шайне çĕклессишĕн нумай тăрăшнă.

Çамрăк ăрăва та вăл çакнах халалласа хăварнă: «Пуринчен ытла чăваш литературине юратмалла. Тăван халăха хисеплемелле, тăван чĕлхене лайăх пĕлмелле. Хамăр тăван чĕлхене хамăр та юратмасан – ăна кам юратĕ тата? Хамăр тăван халăха хамăр та хисеплемесен – ăна кам хисеплĕ-ха апла?»[4].

*Илемлĕ чăваш кĕвви янăраса каять. Экран çинче каçхи тӳпере çăлтăрсем выляççĕ. Уяв вĕçленет.*

---

[4] Элкер, С. Çамрăксене хам çинчен // Элкер, С. В. Хурапа шурă. Тĕрлĕ вăхăтра çырнисем : проза, поэзи, аса илӳсем, кун кĕнекинчен, çырусем, хаклавсем, асăрхаттарусем / С. В. Элкер. – Шупашкар, 1994. – С. 288.

# УСӐ КУРНӐ ЛИТЕРАТУРА

## Кӗнекесем

Элкер, С. В. Ҫырнисене пухса кӑларни : 5 томпа тухать / Семен Элкер. – Шупашкар : Чӑваш АССР государство изд-ви. – 1960 –1964.

Т. 1 : Сӑвӑсемпе поэмӑсем / [А. Эсхель ум сӑмахӗ]. – 1960. – 416 с.

Т. 2 : Хӗн-хур айӗнче : сӑвӑласа ҫырнӑ повесть. – 1960. – 215 с.

Т. 3 : Вутпа тӑвӑл витӗр. – 1962. – 551 с.

Т. 4 : Избранные произведения : [романпа калавсем]. – 1963. – 469 с.

Т. 5 : Вун саккӑрмӗш ҫул : [драмӑлла поэма, калавсемпе очерксем, статьясем]. – 1964. – 402 с.

Элкер, С. В. Вутпа ҫулӑм витӗр : роман / С. В. Элкер. – Шупашкар : Чӑваш кӗнеке издательстви, 1982. – 302 с.

Элкер, С. В. Ирӗк ҫӗршывра / С. В. Элкер. – Шупашкар : Чӑвашгосиздат, 1960. – 24 с.

Элкер, С. В. Ҫутӑ кунсем / С. В. Элкер. – Шупашкар : Чӑвашгосиздат, 1945. – 19 с.

Элкер, С. В. Улӑпсем / С. В. Элкер. – 2-мӗш издани. – Шупашкар : Чӑвашгосиздат, 1956. –28 с.

Элкер, С. В. Хӗн-хур айӗнче : сӑвӑласа ҫырнӑ повесть / С. В. Элкер. – Шупашкар : Чӑваш кӗнеке изд-ви, 1993. – 192 с.

Элкер, С. В. Хурапа шурӑ. Тӗрлӗ вӑхӑтра ҫырнисем : проза, поэзи, аса илӳсем, кун кӗнекинчен, ҫырусем, хаклав-сем, асӑрхаттарусем / С. В. Элкер ; Пухса йӗркелекенӗ, ум сӑ-

махĕпе асăрхаттарăвĕсене çыраканĕ В. Г. Родионов. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 1994. – 447 с.

Эльгер, Семен. Шурăмпуç килсен : роман / С. В. Эльгер. – Шупашкар : Чувашгосиздат, 1953. – 357 с.

* * *

Эльгер, С. В. На заре : роман / С. В. Эльгер ; пер. с чуваш. В. Е. Рзая. – Чебоксары : Чувашское книжное издательство, 1984. – 237 с.

Эльгер, С. В. Под гнетом : повесть в стихах / С. Эльгер ; авториз. пер. с чуваш. М. Кравчука и А. Кузнецовой ; [ил. М. Осипов]. – Чебоксары : Чувашгосиздат, 1960. – 239 с.

## ÇЕМЕН ЭЛКЕР ÇИНЧЕН ÇЫРНИСЕМ

### Кĕнекесем

Кузьмин, В. П. Элкер çăлтăрлăхĕ : чăваш халăх поэчĕ Семен Васильевич Элькер çуралнăранпа 115 çул тултарнине халалласа / В. П. Кузьмин. – Шупашкар : Çĕнĕ Вăхăт, 2009. – 477 с.

Эсхель, А. Поэт кунçулĕ : С. В. Элкер пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен / Аркадий Эсхель. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 1974. – 64 с.

Юхма, М. С. В. Элкер – Чăваш халăх поэчĕ / Юхма Мишши ; [Л. С. Дмитриев ӳкерчĕкĕсем]. – Шупашкар : Аттил, 2014. – 22 с.

* * *

Кузьмин, А. И. Художественная проза С. В. Эльгера / А. И. Кузьмин. – Чебоксары : Чувашгосиздат, 1961. – 136 с.

## Статьясем

Артемьев, А. Мăн çул хĕрринчи çăка : (С. В. Элкер çуралнăранпа 80 çул) / А. Артемьев // Ялав. – 1974. – № 5. – С. 20-21.

Еливанова, Г. Çемен Элкер: «Татах пурăнасчĕ-ха, пурăнасчĕ...» / Г. Еливанова // Тантăш. – 2012. – 12 утă (№ 28). – С. 9.

Ефимов, Г. Аса илӳсем / Г. Ефимов // Тăван Атăл. – 2003. – № 3. – С. 46-48.

Ефимов, Г. Ăшă та тӳрĕ кăмăллăччĕ / Г. Ефимов // Тăван Атăл. – 1994. – № 5. – С. 61-63.

Ирхи, Г. «Упратăр чăнлăх ялавне тĕнче!» / Г. Ирхи // Хыпар. – 2009. – 13 çу. – С. 4.

Лосев, Г. С. Вăл кашнин чĕринчех пурăнать / Г. С. Лосев // Çĕнтерӳшĕн (Йĕпреç районĕ). – 2016. – 1 юпа. – С. 7.

Луç, Г. Куç умĕнче, чун-чĕрере / Г. Луç // Хыпар. – 1999. – 30 ака.

Михайлов, А. С. В. Элкер ячĕллĕ преми 25 çулта : [премин лауреачĕсем çинчен] / А. Михайлов // Хыпар. – 1999. – 17 ака. – С. 7.

Родионов, В. Элкер – аслă çăлтăр / В. Родионов // Халăх шкулĕ = Нар. шк. – 1994. – № 2-3. – С. 107-111.

Станьял, В. Элкер еткерĕ / В. Станьял // Чăваш ен. – 1994. – № 46. – С. 13.

Теветкел, Н. Чакка çĕршывĕнче : Çемен Элкер / Н. Теветкел // Хыпар. – 2009. – 6 çу. – С. 4.

Юмарт, Г. Ф. Çемен Элкер / Г. Ф. Юмарт // Хыпар. – 1999. – 28 кăрлач.

Юхма, М. Çич çăлтăртан чи çутти / М. Юхма // Хыпар. – 2009. – 16 çу. – С. 11. – (Культура : хушма кăларăм / кăларăма Н. Смирнова хатĕрленĕ ; № 5).

* * *

Афанасьев, П. Эльгер Семен Васильевич // Афанасьев, П. Писатели Чувашии / П. Афанасьев. – Чебоксары, 2006. – С. 519-521.

Кириллова И. Ю. Семен Васильевич Эльгер : 1894-1966. Звезда по имени Эльгер / И. Ю. Кириллова // Писатели. – Чебоксары. – 2008. – С. 361-372. – (Б-ка Президента Чуваш. Респ. : т. 6).

Козлов, Ф. Улица Эльгера / Ф. Козлов // Чебоксар. новости. – 2010. – 21 дек. – С. 4.

Теветкель, Н. Его книги не стареют / Н. Теветкель // За победу (Ибрес. р-н). – 2016. – 1 окт. – С. 7 : фот.

# ИЛЕМЛĔ ПРОЗА ĂСТИ

ЧĂВАШ ХАЛĂХ ÇЫРАВÇИ

ÇЕМЕН ЭЛКЕР ÇУРАЛНĂРАНПА

125 ÇУЛ ÇИТНĔ МАЙ

ЛИТЕРАТУРА УЯВĔН СЦЕНАРИЙĔ

# МАСТЕР ХУДОЖЕСТВЕННОЙ ПРОЗЫ

К 125-ЛЕТИЮ СО ДНЯ РОЖДЕНИЯ

НАРОДНОГО ПОЭТА ЧУВАШИИ

СЕМЕНА ЭЛЬГЕРА

СЦЕНАРИЙ ЛИТЕРАТУРНОГО ВЕЧЕРА

Ответственный за выпуск

Г. П. Соловьева

12+

Составитель

О. Н. Тимофеева

Компьютерный набор: О. Н. Тимофеева
Компьютерная верстка: Е. Н. Федотова

Оригинал-макет изготовлен и отпечатан в отделе «Сервис-центр»
БУ «Национальная библиотека Чувашской Республики»
Минкультуры Чувашии
428000, г. Чебоксары, пр. Ленина, 15
Тел.: (8352) 23-02-17, доб. 160
E-mail: publib@cbx.ru; веб-сайт: www.nbchr.ru
Тираж 50 экз.